Приложение № 1 к приказу
Минобразования Чувашии
от 16.09.2020 № 1355

**Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине халаллана́ «Упрар тăван чĕлхемĕре» оратор ăсталăхĕн конкурсĕн**
**ПОЛОЖЕНИЙĔ**

**1. Пĕтĕмĕшле калани**

1.1. Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине халаллана́ «Упрар тăван чĕлхемĕре» оратор ăсталăхĕн конкурсне (малалла – конкурс) пуçараканĕ – Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви, йĕркелекенĕ – Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин хушма професси вĕренĕвĕн «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» бюджет учрежденийĕ (малалла – Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ).

**2. Тĕллевĕпе задачисем**

2.1. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче вĕренекен ачасене хăйсем чăваш пулнине кăтартма, чăваш чĕлхине тата лайăхрах пĕлме пулăшасси;

2.2. Яш ачасен хăйсем мĕнле çĕр-шыв гражданинĕ пулнине ăнланса илме май паракан тĕп компетенцисене аталантарасси (ик чĕлхелĕх, культурăсен хушшинчи çыхăнулăха пĕлни, информаципе коммуникаци тата организаципе йĕркелӳ компетенцийĕ);

- шкул ачисен монолог тата диалог формипе чăвашла калаçас ăсталăха туптасси;
- халăх умĕнче калаçас хăнăхăва аталантарасси;
- чăваш чĕлхипе усă куракан талккăша сарасси.

**Конкурса хутшăнакансем**

Конкурса Чăваш Республикинчи тата ун тулашĕнчи вĕренӳ организацийĕсен 7–8-мĕш класĕсенче чăваш чĕлхи вĕренекен ачасем хутшăнаççĕ.

**Конкурса хутшăнмалли темăсем**

1) Камсем эпир, мĕнле йăхран эпир?
2) Илемлен, Чăваш çĕр-шывĕ!
3) Республикăшăн усă ĕç тăвасчĕ.
4) Чăвашсем, чăмăртанар!
5) Чăваш çĕрĕ, пурăн ĕмĕр.

Конкурс чăвашла иртет. Конкурса хутшăнакансен чăвашла анчах калаçмалла.

Конкурс **икĕ** тапхăрпа иртет:

1-МĔШ ТАПХĂР – муниципалитет тапхăрĕ – районта е хулара 2020 çулхи çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа авăн уйăхĕн 30-мĕшĕччен иртет.

Конкурсăн пĕрремĕш тапхăрне район е хула администрацийĕн вĕренӳ управленийĕсем ирттереççĕ. Ку тапхăра ирттерме кашни район е хула оргкомитет (малалла – вырăнти оргкомитет) тăвать. Вырăнти оргкомитет жюри членĕсене палăртать, вĕсен шутĕнче паллă поэтсем, писательсем тата культура çыннисем пулмалла.

Вырăнти оргкомитет вĕренӳ организацийĕсене конкурс пуласси, хăçан тата ăçта иртесси çинчен çырупа пĕлтерет; конкурса ирттерет, çĕнтерӳçĕсемпе призерсене палăртать.

Конкурсăн муниципалитет тапхăрне хутшăнакан кашни ача конкурса хутшăнни çинчен ĕнентерекен свидетельство илет, çĕнтерӳçĕсемпе призерсем дипломсене тивĕçеççĕ. Свидетельствăсемпе дипломсене район е хула администрацийĕн вĕренӳ управленийĕсем параççĕ.

2-МĔШ ТАПХĂР – республика тапхăрĕ кĕретсĕр (заочно) иртет.

Конкурсăн 2-мĕш тапхăрне хутшăнма районта е хулара малти вырăна тухнă 2 ачана ирĕк параççĕ: 7-мĕш класра вĕренекен 1 ача, 8-мĕш класра вĕренекен 1 ача.

Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенчен:
7-мĕш класра вĕренекен 3 ача, 8-мĕш класра вĕренекен 3 ача.

Районта е хулара малти вырăна тухнă ачасен калаçăвне видео евĕр ÿкерсе илмелле. Çак видеофайла yandex е mail тÿлевсĕр усравлăха (бесплатное облачное хранилище на yandex или mail) вырнаçтармалла. Видеоматериала вырнаçтарнă адреса заявкăра палăртса (1-мĕш хушăм) **Чăваш Республикин вĕренÿ институтне chrio6@mail.ru адреспа юпа уйăхĕн 5-мĕшĕччен çак материалсене ярса памалла:**

1) Конкурсăн республика тапхăрне хутшăнакансен списокĕ (Wort тата pdf форматсемпе)
2) Конкурс положенине тивĕçтерекен видеоматериал
3) Ача çинчен калакан даннăйсемпе усă курма ирĕк паракан заявлени (согласие на обработку персональных данных) (2-мĕш хушăм).

Видеокалаçăва смартфон, планшет, видеокамера, веб-камерăллă компьютер е ноутбукпа усă курса ÿкерме юрать. Видеокалаçăва ачасен хăйсен хушамачĕпе ятне, вĕренÿ организаци ятне, миçемĕш класра вĕреннине каланинчен пуçламалла.Унтан темăна уçса памалла.

Видеокалаçу 5-7 минут тăсăлмалла. Видеофайл форматчĕ **mp4** е **flv** пулма пултарать.

Жюри ачасен ĕçĕсене хакланă чухне çак енсене пăхать:

1) проблемăна ăнланни (0–3 балл);
2) хăй каланине ĕнентерме пултарни (0–3 балл);
3) автор хăйĕн материалне туллин пĕлни тата каласа пама пултарни (0–3 балл);
4) пуплев тата грамматика нормисене пăхăнни (0–3 балл);
5) ÿт-пĕве хускалантарас культура (0–3 балл);
6) ыйтусене хуравлани (0–2 балл);
7) регламента пăхăнни (0–2 балл).

Жюри хаклав критерийĕсене шута илсе пĕтĕмлетÿ тăвать, протокола çырать. Ăна жюри председателĕ е ун çумĕ алă пусса çирĕплетет.

2-мĕш тапхăра хутшăнакансене пурне те Чăваш Республикин вĕренÿ институчĕн ĕнентерÿ хучĕпе (свидетельство, электрон форматпа), çĕнтерÿçĕсене Чăваш Республикин вĕренÿ тата çамрăксен политикин министерствин дипломĕсемпе тивĕçтереççĕ. Конкурса ирттерекенсем конкурсантсем валли ятарлă парнесем палăртма пултараççĕ.

2020 çулхи юпа уйăхĕн 20-мĕшĕнче Чăваш Республикин вĕренÿ институтĕнче конкурса пĕтĕмлетеççĕ, конкурс çинчен информаци институт сайтĕнче (www.chrio.cap.ru) пулать.

**Конкурса йĕркелекенсен адресĕ:**

428001 Шупашкар хули, М. Горький проспекчĕ, 5-мĕш çурт, Чăваш Республикин вĕренÿ институчĕ, 217-мĕш, 216-мĕш пÿлĕмсем (регион аталанăвĕн центрĕ).

Телефонсем 88352 459996, 88352 584644
E-mail: chrio6@cap.ru

Положенин 1-мĕш хушăмĕ

*Асăрхаттару: списока икĕ форматпа ярса пама ыйтатпăр:*
1) *текстпа (Microsoft Word)*
2) *скан-копипе.*

Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине халалланă «Упрар тăван чĕлхемĕре» оратор ăсталăхĕн конкурсĕн республика шайĕнчи тапхăра хутшăнакансен списокĕ

| №№ | Конкурса хутшăнаканăн хушамачĕ, ячĕ (туллин) | Класс | Вĕренӳ организацийĕн чăвашла ячĕ | Вĕренӳ организацийĕн вырăсла ячĕ | Конкурса хатĕрлекен педагогăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ (туллин), должноçĕ | Педагогăн телефон номерĕ | e-mail | Видеоматериал вырнаçтарнă адрес |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | | | | |

Район / хула администрацийĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ

_________________ ________________________
*ал пусни* *хушамат, ят, ашшĕ ячĕ*

Çырăва хатĕрлекенĕн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ
Телефон

Положенин 2-мĕш хушăмĕ

**Согласие на обработку персональных данных**

Я,_____________________________________________________________________________,
*(ФИО родителя или законного представителя)*
_____________________________________________________________________________
_____________________________________________________________________________
*(адрес)*
даю согласие на обработку персональных данных моего ребенка с передачей по общим сетям связи, в т.ч. Интернет
_____________________________________________________________________________
*(фамилия, имя, отчество ребенка)*
_____________________________________________________________________________
даю свое согласие Министерству образования и молодежной политики Чувашской Республики (далее – Оператор), на обработку своих персональных данных, на следующих условиях:

1. Оператор осуществляет обработку персональных данных Субъекта исключительно в целях организации и проведения республиканского конкурса ораторского мастерства обучающихся 7-8 классов «Упрар тăван чĕлхемĕре», посвященного 100-летию со дня образования Чувашской автономии.

Перечень персональных данных, передаваемых Оператору на обработку:

- фамилия, имя, отчество;
- образовательная организация, где обучается ребенок;
- контактный телефон (дом., сотовый, рабочий);
- прочие.

2. Субъект дает согласие на обработку Оператором своих персональных данных, то есть совершение, в том числе, следующих действий: обработку (включая сбор, систематизацию, накопление, хранение, уточнение (обновление, изменение), использование, обезличивание, блокирование, уничтожение персональных данных), при этом общее описание вышеуказанных способов обработки данных приведено в Федеральном законе от 27.07.2006 № 152-ФЗ, а также на передачу такой информации третьим лицам, в случаях, установленных нормативными документами вышестоящих органов и законодательством.
3. Настоящее согласие действует бессрочно.
4. Настоящее согласие может быть отозвано Субъектом в любой момент по соглашению сторон. В случае неправомерного использования предоставленных данных соглашение отзывается письменным заявлением субъекта персональных данных.
5. Субъект по письменному запросу имеет право на получение информации, касающейся обработки его персональных данных (в соответствии с п.4 ст.14 Федерального закона от 27.06.2006 № 152-ФЗ).

«____»______________ 2020 г. __________________ __________________
*Подпись* *ФИО*

Подтверждаю, что ознакомлен(а) с положениями Федерального закона от 27.07.2006 №152-ФЗ «О персональных данных», права и обязанности в области защиты персональных данных мне разъяснены.

«____»______________ 20 г. __________________ __________________